25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
28
ЫТЛАРИКУН
99 (6034) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕпе ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

90. Первомайски районри «Красное Именево» колхоз (колхоз председателĕ А. П. Иванов юлташ). Колхоз çуракинче кирлĕ пулма пултаракан вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ, колхозри пур культурăсен те вăрлăхĕсем акма юрăхлă кондициллĕ. Колхоз вăрлăх парса пулăшас йĕркепе «Путь Ленина» колхоз валли 55 центнер тырă уйăрса хунă. Ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса пĕтернĕ. Уйхире 1000 тонна тислĕк кăларнă, кĕл тата ытти тĕрлĕ удобренисем 80 центнер пухса хатĕрленĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 26-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пăллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 21 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 10 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн подводнăй лодкине путарнă.

* * *

Апрелĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине, 6 полевой орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тугунçул çинчи эшелона сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть гитлеровецсен танксем пулăшса пынă икĕ атакине ăнăçлăн сирсе янă. Пирĕн боецсем халăх пурăнакан икĕ пункта хăвăрт пырса кĕнĕ те гитлеровецсене унтан хăваласа кăларнă. Нимĕçсен 3 танкне, минометсен 2 батарейине тата пĕр орудине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем персе нимĕçсен темиçе дзотне çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 160 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн артиллеристсем тăшман пехотин пысăк колоннине сапаласа янă. Батарея тĕл персе противникăн боеприпассем хунă пысăк складне вут тивертсе янă, унти боеприпассем сирпĕнсе çурăлни 30 минута хушши илтĕнсе тănă.

* * *

Противника хирĕç çапăçса, И. Азотков капитанăн йывăр танксен ротинимĕçсен танксене хирĕç пемелли 35 орудине, 12 йывăр орудине, 8 зенитнăй орудине, 9 танкĕпе бронемашинине, пулеметсен 19 йăвине пĕтерсе тăкнă, 17 дзот çĕмĕрнĕ тата противникăн чĕрĕ вăйне пысăк сухатусем кӳнĕ.

* * *

18 красноармеец-разведчик, тĕтреллĕ çанталăк тăнипе усă курса, халăх пурăнакан П. пункт районĕнче противникăн тылне кĕрсе кайнă. Хăюллă боецсем гранатăсем вăркăнтарса нимĕçсен 3 землянкине тата 3 станковăй пулеметне сирпĕнтерсе янă. Кун хыççăн тытăçса çапăçма кĕрсе кайнă. Пирĕн разведчиксем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна пĕтерсе тăкнă, парăннисене тыткăна илнĕ те хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ нимĕçсен пехотнăй полкĕн команднăй пунктĕ вырнаçса тăнă яла атакăланă. Часовойсене шăппăн пĕтерсе тăкса, партизансем нимĕçсен чаçĕн штабне аркатса тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсем ялтан тухса тарнă. Вĕсен унта 63 салтакпа офицер вилсе юлнă. Партизансем штаб документĕсене тата нумай хĕçпăшал тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 79-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 212-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Людвиг Фонгерихтен çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть, эпир çар ĕçне Нанси хулинче (Францире) вĕренеттĕмĕр. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн дивизие Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне васкавлăн ячĕç. Килнĕ чухне пире офицерсем çапла каларĕç: пире çапăçăва çуркуннеччен кĕртес çук, терĕç. Мартăн 21-мĕшĕнче эпир Харьков районне çитрĕмĕр, пире çитнĕ-çитменех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Вырăссем ку участокра вăйлă атакăсем пуçласа янă. Эпир пысăк сухатусем тӳсрĕмĕр. Ывăнса çитнĕ, вăйран тухнă салтаксем çапăçăва кĕрессшĕн пулмарĕç, анчах вĕсене вăйпа хăваларĕç. Хыçалтан рота командирĕ Штрунк лейтенант тата ытти офицерсем алра револьвер тытса пычĕç. Тăрса юлакансене çавăнтах персе пăрахатпăр, тесе хăратрĕç вĕсем. Çав çапăçусенче пирĕн батальон хăйĕн личнăй составĕнчен виçĕ пайран икĕ пайне çухатрĕ».

* * *

Пирĕн боецсем Ленинград облаçĕнчи Борки ялĕнче, ăна нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, 11 красноармеецăн çунтарса янă виллисене тупнă. Ялти çынсем çапла каласа кăтартнă: çав красноармеецсем аманнă пирки нимĕçсен аллине лекнĕ. Гитлерла бандитсем вĕсене нумайччен асаплантарнă, унтан пĕр пӳрте хупса питĕрсе илнĕ те пӳртне вут тивертсе янă.

Апрелĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Калинин фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 12 танкне çĕмĕрнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн чылай участокĕсенче пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 7 дзотне, 11 блиндажне аркатнă, пĕр оруди, 9 станковăй пулемет тата минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен пехотин батальонĕ танксен хӳттипе çĕрле пирĕн стрелковăй подразделенисенчен пĕрин çине (Хĕвеланăç фрончĕ) атака туса пыма хăтланнă. Пирĕннисем хаяррăн хирĕç тăнипе тĕл пулса, гитлеровецсен çапăçу уй-хирне 60 виле пăрахса хăварса, хăйсен малтанхи вырăнне чакма тивнĕ. Артиллерирен пенипе тăшманăн танкне пĕтерсе тăкнă. Кӳршĕри участокра противника хĕссе пырса, пирĕн боецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Швецов юлташ ертсе пыракан 8 красноармеец хӳтĕлесе тăракан вырăна ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ гитлеровецсем 100 çынна яхăн тапăннă. Нимĕçсене çывăха ярса, пирĕн боецсем вĕсем çине винтовкăсемпе пулеметран пеме тытăннă. Вилнисемпе аманнисене 30 салтак пăрахса хăварса, противникăн каялла чакма лекнĕ.

* * *

Севастополь хулине хӳтĕлекен пирĕн пĕр чаçăн снайперĕсем пĕр кун хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 116 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче тăшман тылĕнче çапăçакан партизансен П. юлташ ертсе пыракан отрячĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче çĕрле противникăн Н. пунктри гарнизонĕ çине тапăннă. Партизансемпе çапăçнă çĕрте гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 90 çын ытла вилнĕ тата аманнă. Партизансем 40 лаша, ручной пулемет, патронсем 3.800 штука тата ытти боеприпассене тытса илнĕ.

* * *

Румыни артиллерин 2-мĕш полкĕн тыткăна лекнĕ салтакĕ Константин Светку çапла каласа панă: «Румыни салтакĕсем кĕлмĕçсемпе пĕр пекех пурăнаççĕ. Пире питĕ начар çитереççĕ. Çи-пуç кивĕ, çĕтĕк-çатăк. Пурте пыйтланса кайнă. Вăрçă пуçланнăранпа та эпир пĕре те мунча кĕмен. Пирĕн тăван çĕршывра мĕн пулнине офицерсем пирĕнтен питĕ хытă пытараççĕ. Анчах эпир нимĕçсем Румынине çаратма чарăнманнине, пирĕн тăвансемпе хурăнташсем выçăла аптăраса пурăннине пĕлетпĕр. Румынсем пирĕн çĕршыва пусмăрлăха кĕртсе ӳкерес гитлеровецсемшĕн вăрçасшăн мар. Нумай пулмасть, пирĕн полкри 8 салтак яла улăм илме кайрĕç. Каялла виллĕкĕшĕ кăна таврăнчĕç, ыттисем тарнă. Кун пек тунисем полкра нумай пулнă. Дезертирсем граждански тумтир тăхăнаççĕ те сĕтĕрĕнсе çӳресе, ялсенче пытанса пурăнаççĕ.

* * *

Апрелĕн 8-мĕшĕнчеВаррем—Фексе (Бельгия) чугунçул çинче боеприпассем тиенĕ поезд ӳпĕнсе кайнă. Поезда ăсатакан нимĕç салтакĕсем нумайĕшĕ вилнĕ тата аманнă. Çакă вăл Бельги патриочĕсем ку чугунçул çинче юлашки вăхăтра организациленĕ виççĕмĕш катастрофа ĕнтĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

Ĕçсыннисене пурне те çĕршыв оборони валли хĕрӳллĕн ĕçлеме хушакан вăрçă обстановкине пула, кăçалхи майăн 1-мĕшпе 2-мĕш кунĕсене ĕç кунĕсем тума кирли çинчен ĕçсыннисенчен нумай йышлă ыйтусем килнине шута илсе, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи майăн 1-мĕшпе 2-мĕш кунĕсене ĕç кунĕсем тума йышăннă.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XV-мĕш пленумĕ

Апрелĕн 25-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум виçĕ ыйту сӳтсе яврĕ: 1. 1942 çулти пĕрремĕш кварталта партие илмин итогĕсем çинчен, 2. Хулари предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсем пирки тата рабочисемпе служащисем пахча-çимĕçсем лартса тăвас ĕç çинчен, 3. Организациллĕ ыйтусем.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ М. М. Романова юлташ, иккĕмĕш ыйтупа — хула Совечĕн исполком председателĕ И. И. Золотников юлташ докладсем туса пачĕç.

Çак ыйтусем тăрăх пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум ВКП(б) хула комитечĕн промышленность тата транспорт енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма М. И. Волков юлташа çирĕплетрĕ. Пленум хула комитечĕн бюро членĕ пулма Ф. С. Моргунов юлташа çирĕплетрĕ.

64 миллион та 10 пин тенкĕлĕх

СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕçе апрелĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те чарма распоряжени пачĕ. Пирĕн Чăваш республикинче çĕнĕ заема, апрелĕн 25-мĕшне кĕртсе шутласан, урăхла каласан, 12 кун хушшинче 64 миллион та 10 пин тенкĕлĕх, бюджетпа палăртнипе танлаштарсан, 133,6 процент вырнаçтарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 24.573.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 29.007.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.430.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕçсыннисем заема 6.338.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Районсем пурте заема бюджетпа палăртнинчен чылай ирттерсе сарчĕç. Бюджетпа палăртнипе танлаштарсан, çĕнĕ заема Çĕмĕрле районĕ 190 процент, Сĕнтĕр — 164 процент, Советски — 162 процент, Чкаловски — 161 процент, Елчĕк — 154 процент сарнă.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлă вĕçленчĕ. Республикăри ĕçсыннисем çĕнĕ заема пурте пĕр çын пек çырăнса, фашистла пусмăрçăсене пĕтерсе тăкассишĕн нимĕн те шеллеменнине, тăван çĕршыва, Совет правительствине, Ленин—Сталин партине чĕререн юратнине кăтартса пачĕç.

Заема вырнаçтарнă вăхăтрах подписка укçине пухасси анлăн сарăлса кайрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Сĕнтĕр, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Советски, Шăхасан районĕсем кăтартуллăн ĕçлерĕç. Вĕсем колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарнă заем укçине 100 процентпех пухса çитерчĕç.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе малашне те тимлĕн ĕçлесси — партипе совет тата финанс органĕсен чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

ИКĔ КУН ХУШШИНЧЕ

СĔНТĔР. «Красное Сормово» колхозра заема 42 пин тенкĕлĕх сарса, укçине икĕ кун хушшинчех пухса пачĕç. Укçа пухас тĕлĕшпе колхоз председателĕ Е. Смелов юлташ тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл хăй çиллĕнчех пин тенкĕ тӳлесе ыттисене пример кăтартрĕ.

И. ИВАНОВ.

Обор[illegible] гектарĕсем акаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем Краснодар крайĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçалхи çуракинче планран ирттерсе оборона гектарĕсем акса хăварасси çинчен чĕнсе каланине ырларĕç. Чăваш Улхашри «Хĕлхем» колхозăн членĕсем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăванла пулăшу парас шутпа кăçал планран ирттерсе 2 гектар тырă акса хăварĕç. [illegible] «Лесной огонек» колхоз та 2 гектар çине тырă акать.

— Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă колхозсене тăванла пулăшу парасси—пирĕн хисеплĕ ĕç. Эпир хамăрăн тăвансене тăванла пулăшу пама яланах хатĕр,—теççĕ колхозниксем.

Районри ытти колхозсем те оборона гектарĕсем акса хăвараççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Производствăллă парнесем

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри малта пыракан сменăсемпе бригадăсем Май уявне апрель уйăхĕнчи плана срокчченех тултарнипе кĕтсе илеççĕ. Мастер М. Сидорчев юлташ ертсе пыракан сменăпа комсомолка Т. Пакулина ертсе пыракан бригада çак уйăхри плана 23 кун хушшинчех тултарчĕç.

Çавăн пекех тепĕр цехри малярсен бригади те уйăх планне срокчченех тултарчĕ. Бригада членĕсем—çамрăк хĕрарăмсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Сăмахран, Тарлыкина, Терехина, Комиссарова юлташсем сменăри нормăсене 250 процент таран тултарма пуçларĕç.

Комбинатăн пĕр цехĕнчи станочник Емельянов, фрезеровщик Порфирьев юлташсем ФЗО шкулĕнчен нумаях пулмасть вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем—двухсотниксем, уяв умĕнхи кунсенче нормăна тăтăшах 200 процент тултарса ĕçлерĕç.

Çамрăк стахановец-столяр М. Маркелов юлташ хăйĕн ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пырать. Апрелĕн 18-мĕшĕнче сменăри нормăна 327 процент тултарчĕ пулсан, 20-мĕшĕнче—340, 22-мĕшĕнче — 357 процент тултарчĕ. Учоткин, Полукарпов стахановецсем те нормăна 3 хут ирттерсе тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

„Пионер Чувашии" танк тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Етĕрнери пионерсем чĕнсе калани çине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума Комсомольскинчи вăтам шкулта 500 тенкĕ, Хиртри Явăшри туллимар вăтам шкулта 450 тенкĕ, Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнчи туллимар вăтам шкулта 560 тенкĕ пухнă.

В. ВИКТОРОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри шкулсенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕçе активлăн туса пыраççĕ. Ку таранччен вĕсем 6 пин тенкĕ ытла укçа пухнă.

Анат-Кăмашари вăтам шкулта вĕренекенсем Етĕрне хулинчи пионерсен активĕ чĕнсе каланине ырласа, çийĕнчех çав хисеплĕ ĕçе активлăн хутшăннă. Ик-виçĕ кун хушшинче кăна вĕсем танк тума çĕре 750 тенкĕ пухса панă.

«Пионер Чувашии» танк тума пуçламăш классенче вĕренекенсем те хавхаланса укçа параççĕ. Çапла, сăмахран, Мыслец разъездĕнчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем — 71 тенкĕ, Черкагаснра — 50 тенкĕ ытла пухнă.

* * *

СОВЕТСКОЕ. «Пионер Чувашии» танк тума Шĕмшешри вăтам шкулта вĕренекенсем 500 тенкĕ, Юрмекейкинăри пуçламăш шкулта вĕренекенсем 400 тенкĕ пухса пачĕç.

Н. ЕФИМОВ.

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Етĕрнери çамрăк патриотсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, Сĕнтĕр районĕнчи вĕренекенсем «Пионер Чувашии» танк тума 9.785 тенкĕ укçа пухнă. Вăл шутран Юванкасри вăтам шкулта вĕренекенсем 980 тенкĕ, Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем 440 тенкĕ, Юнкăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 424 тенкĕ пухса панă.

«Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕçе колхозниксем те хутшăнаççĕ. Юнкă ялсоветне кĕрекен «Новая Юнга» колхоз членĕсем 1072 тенкĕ пухса районри перекет кассине хывнă.

Г. АКИМОВ.

* * *

ÇĔРПУ. Анат Кипекçери туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Етĕрнери çамрăк патриотсен чĕнĕвне кашни класрах, кашни отрядрах сӳтсе яврĕç, çав чĕнĕве хапăл туса йышăнчĕç. Çавăн хыççăн «Пионер Чувашии» танк тума 837 тенкĕ укçа пухрĕç.

К. ПЕТРОВА.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ТĂВАЙ. Кармалти пуçламăш шкулта вĕренекенсем оборона промышленноçĕ валли тимĕр-тăмăр пĕрмаях пухаççĕ. Çак кунсенче вĕсем çывăхри колхозсене çӳресе 100 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Г. МАЛЕНДЕЙ.

ÇУРХИ АКА ПУÇЛАНЧĔ

Пĕрчĕллĕ тырăсене акма тытăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 26-мĕш. (Хамăр корр.). Енер Пояндайкинăри «Çĕнĕ пурнăç» колхоз акма юрăхлă çĕр лаптăкĕсене суйласа, 12 гектар çине сĕлĕ акнă. Колхозăн пур бригадисем те çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Çуракин малтанхи кунĕнчех колхозниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Н. Федотов, Я. Малашкин ватă колхозниксем 2-шер гектар тырă акрĕç.

Тĕрĕслӳ мĕн кăтартрĕ

ВĂРМАР. Çак кунсенче районра колхозсем çуракине тухма хатĕрленсе çитнине пăхса тухнă. Тĕрĕслӳ çакна кăтартса пачĕ. Районри 55 колхозран 51 колхоз çуракине тухма пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ. «Труд», «Победа», «Ямбай», «Большевик» колхозсем çеç çуракине тухма хатĕрленсе çитмен. «Ямбай» колхозра плугсене юсаса çитермен, лашасене вăйлă апат çине тăратнă пулсан та, вĕсенчен чылайĕшĕ вăйсăр-ха.

Район ялхуçалăх кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕç тунă. Кĕске срокла курссенчен колхоз председателĕсем 45, агротехниксем 38, уйхир ĕçĕнчи бригадирсем 145, пахча-çимĕç лартса тăвакан бригадирсем 30, кок-сагыз акса тăвакан звеньевойсем 52, хурт-хăмăр пăхакансем 22, выльăх-чĕрлĕхсене чуптаракан пунктсен заведующийĕсем 11 çын вĕренсе тухнă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче районра химизаторсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Вăл канашлура акмалли вăрлăхсене массăлăн яровизацилеме тата протравливани тума тытăнас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртнă.

Агроном Т. НИКИТИН.

Эпир хатĕр

ШАМАРША. Кивĕ Шăмăршăри «Динамо» колхоз председателĕ коммунист Н. Рахманов юлташ колхозри агитколлективăн руководителĕ пулса ĕçлет. Агитколлективăн пĕтĕм ĕçне колхозниксен массипе çыхăнтарса туса пынипе колхоз кăçалхи çуракине тухма ăна пысăк пахалăхпа туса ирттерме хатĕрленсе çитрĕ. Çуракине акмалли вăрлăхсене план тăрăх 466 центнер хатĕрлемелле пулнă пулсан, 523 центнер тасатса сортласа хунă. Вăрлăхсем пысăк пахалăхлă, пурне те тивĕçлĕ кондицие çитернĕ. Çĕрулми вăрлăхне те планран ирттерсе уйăрса хунă.

Колхоз уйхире 1950 лав тислĕк кăларнă. Агротехникăн çуркуннехи мероприятийĕсене пурнăçлама хатĕрленсе пухнă 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкне типĕтсе порошок тунă. Вăл порошокпа ыраш калчисене апатлантарма хатĕрленеççĕ.

Çуракине колхоз 48 лашапа тухмалла. Вĕсем пурте ĕçе хатĕр, халĕ ĕç умĕнхи кануpa вăйлă апат çинче тăраççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе урапасене тата кашни лашана кӳлсе тухмалли хатĕрсене çителĕклĕ таранах юсаса хунă.

Çуракинче ĕçleme кашни колхознике, колхозницăна вырăн кăтартса панă. Звеносем организацилесе вĕсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Çакă вăл йăлтах колхозăн кăçалхи ĕçсен производствăллă планĕнчен тухса тăрать. Колхоз правленийĕ кăçалхи уйхир ĕçĕсен планне тĕплĕн шутласа тунă, унта кашни ĕç шутра тăрать тата ăна хăш звено, хăш вăхăтра тăвассине палăртнă. Производствăллă плана колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ, агитколлектив пулăшнипе ăна кашни колхозницăна ăнлантарса панă. Кăçал колхозра кашни çын, 14 çулти ачасенчен пуçласа ватă колхозниксем патне çитиех, активлăн ĕçе хутшăнать.

Бригадăсемпе звеносем çуракине кăтартуллăн, пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеме социализмлă обязательствăсем илеççĕ, ĕç хатĕрĕсене тапах тепĕр хут тĕрĕслеççĕ. Çураки вăхăтĕнче кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухмалла, вĕсен редакторĕсене уйăрса хунă. Çураки вăхăтĕнче агитколлективăн ĕçĕ йăлтах уйра пулать.

Н. ПАДИАРОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. «Пионер» колхозăн 2-мĕш бригадине Пугачев юлташ ертсе пырать. Çак бригада çулсеренех пысăк тухăçлă тыррăн туса илет. Кăçал та бригада кашни гектартан 120 пăтнă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлет.

Бригада çуракине тухма пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. Уйхире 985 лав тислĕк кăларнă, кĕрхи тырăсене апатлантарма 26 центнер кĕл пухнă, 5 плуг, 12 сӳре, 14 урапа çуракине тухма хатĕрлесе лартнă. Бригада кăçал хăйне уйăрса панă участоксем çине чи пахa сортлă вăрлăхсем акать. Колхозниксемпе колхозницăсем кашниех кăçалхи çуракине пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн тăрăшаççĕ. Г. Павлова, Е. Федорова, М. Александрова колхозницăсем кирек мĕнле ĕçе те пысăк тимлĕхпе пурнăçласа пыраççĕ. Ватă çынсем А. Ефремовпа И. Чернов ĕçрен пĕр кун та юлмаççĕ.

А. КРАСНОВ.

ВĂРЛĂХСЕНЕ ПРОТРАВЛИВАНИ ТĂВАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракинче акмалли вăрлăхсене протравливани тума тытăнчĕç. Шурçырма ялсоветĕнчи «Унгострой» колхоз 36 центнер тулă вăрлăхне типĕ майпа протравливани туса хунă. Çавăн пекех Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз та 18 центнер тулă вăрлăхне протравливани тунă, 5 центнер çĕрулми лартма хатĕрлесе хунă. «Красный Пахарь» колхоз 50 центнер çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме хунă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

„Çуракине вăтам хатĕрленнĕ колхозра"

ЧКАЛОВСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр., телефонпа). Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Ахсянов Патăръелĕнчи «Путь Ленина» колхоза çуракине вăтам хатĕрленнĕ колхозсен шутне кĕртет. Тĕрĕссипе вăрлăх хатĕрлес, ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе колхоз питĕ кая юлнă.

«Уйрăм культурăсем тăрăх, — тет колхоз председателĕ Тарасов юлташ,— сĕлĕ вăрлăхĕ 300 центнер ытла, вир 30 центнер, çĕрулми 400 центнера яхăн çитмеççĕ, ытти культурăсем мĕн чухлĕ çитменнине калама йывăр».

— Вăрлăх сортланă-и тата?

— Сортланă хăшпĕрне. Тулă 300 центнер, пăрçа 150 центнер, урпа 120 центнер, сĕлĕ 100 центнер сортланине пĕлетĕп. Сортламалли те нумай-ха.

Вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслемен, сеялкăсемпе сӳресене юсаман, сӳсменсемпе йĕнерчĕксем япăх, урапасем юсавсăр...

Заготзерно пунктĕнче ытти культурăсемпе улăштарса 300 центнер вăрлăх илмелле пулнă пулсан, пĕр центнер та улăштарман, МТС валли горючи турттарман. Пĕр сăмахпа каласан, паян тумалли ĕçсем питех те нумай.

Колхоз çуракине начар хатĕрленнине Тарасов юлташ хăй «колхоз председателĕнче икĕ уйăха яхăн кăна ĕçленипе» тата бригадирсем ытлеменнипе ăнлантарса парать. Ку тĕрĕс мар. Çуракине япăх хатĕрленни колхозра ĕç дисциплини сӳрĕккинчен килнĕ.

Колхозра 12 бригада. Пĕр бригадин те çуракине тивĕçлипе хатĕрленмен. 25—30 çын ĕçе тухас вырăнне 7—8 çын кăна тухать. Колхоз бухгалтерĕпе учетчикĕ хăйсем те вырсарникунсенче ялан тенĕ пекех ĕçе тухмаççĕ. Канмалли кун тăваççĕ. Бригадирсем председатель панă нарядсене вăхăтра пурнăçламаççĕ.

Колхозри ĕçсем япăххин тĕп сăлтавĕсем шăпах çакăнта. Анчах ĕç дисциплинине çирĕплетес, колхоза тата бригадăсене ертсе пырас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе колхозри парторганизаци (секретарĕ Цветков юлташ) сахал интересленет. Колхоз хуçалăхне çĕклес ыйтупа тӳррĕн ĕçлес вырăнне, Цветков юлташ пухусемпе заседанисенче сăмахсем тухса каланипех чарăнса ларнă. Çакă ĕнтĕ, паллах, кирлĕ результатсем паман. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозра сахал пулнă. Çавăнпа ăна «Çуракине вăтам хатĕрленнĕ колхоз» тесе шанса пурăннă.

П. НИКОЛАЕВ.

Колхозсене—çĕнĕ кадрсем

СĔНТĔРВĂРРИ. Райсовет исполкомĕн çĕрĕç пайĕ çак кунсенче колхоз председателĕсен 5 кунлăх курсне туса ирттерчĕ. Курсра 43 колхозăн председателĕсем пулчĕç. Вĕсем партипе правительствăн решенийĕсене, çуркунехи агротехникăллă мероприятисене вĕренчĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри задачăсемпе тата ĕçшĕн кунпа тӳлес йĕркене пурнăçласа пырас ыйтупа палларĕç. Юлашкинчен колхозсен председателĕсем ялхуçалăхĕнче малта пыракан Пĕчĕк Маклашкинăри «Хĕрлĕ Çар» колхоз мĕнле ĕçленине кайса курчĕç.

Ялхуçалăхĕ валли кадрсем хатĕрлес плана пурнăçласа, район ку таранччен 54 бригадира, 12 химизаторпа яровизатора, 12 кок-сагыз акса тăвакана тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене 41 çынна кĕске срокла курссенчен вĕрентсе кăларнă.

А. РАЗИН.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН ДЕЛЕГАЧĔСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧЕ. Ӳкерчĕк çинче: делегатсем Хĕрлĕ Çар валли парнелĕх илсе килнĕ ...ртăна лартса парассĕ.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Нимĕçсен 35-мĕш дивизин халиччен тата хальхи пурнăçĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 25-мĕш. Фашистсен вăрă-хурахла çарĕнче 35-мĕш пехотнăй дивизи «пысăк хисеплĕ» пулнă. Çак дивизин командирне — Эйтгер фон Роман генерал-лейтенанта «фюрер» темиçе хутчен те тав тунă. Дивизи Польшăра, Бельгире, Францире вăрă-хурахла çаратса çӳренĕ. Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ пирĕн çĕрсенче çак дивизи хăйĕн хыçĕнче [illegible] ватса, çĕмĕрсе, тискер каййăкла [illegible] çӳрени йĕрĕсене хăварнă. Çак дивизири салтаксен чылайĕшĕн «тимĕр крестсем» те пулнă. Анчах Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче 35-мĕш дивизин речĕсем палăрмаллах сайралнă. Çавăн пекех вăрçă хатĕрĕсем те сахал мар пĕтнĕ.

Командующи 35-мĕш дивизие тыла илсе тухса кантарма васканă. Ăна 5 кунлăха канма ирĕк панă та, унта пырса çитмесĕрех кăларнă. Уголовниксем темĕн чухлĕ хушса, унăн сайраланнă речĕсене тултарнă. Дивизие артиллери нумай хушса панă. Дивизие канма панă вăхăт тулмасăрах çĕнĕрен çапăçăва кĕртсе янă. Çав çапăçусем мĕнле иртни çинчен салтаксен дневникĕсем пит те аван каласа парассĕ.

Акă мĕн çырса хăварнă Штегеман лейтенантăн ротинчи пĕр салтак, çапăçура вилнĕскер:

«Февралĕн 13-мĕш. Ирхине 6 сехет çитесре пире пĕр кĕтмен çĕртен вăратрĕç. Пуçтарăнмалла пулчĕ. Фронтра ĕçсем ăнăçлă мар.

Февралĕн 21-мĕш. Витебскра тăрăнтăмăр. Унта пĕр çуртра вырнаçтарчĕç. Каçхине противникăн авиацийĕ пырса тапăнчĕ, вилекенсем нумай пулчĕç.

Февралĕн 23-мĕш. Авиаци каçхине татах вăйлăнрах тапăнчĕ. Вырăссен авиаци уявĕн кунĕ. Вĕсем хăйсен уявĕ кунĕнче те вĕçессĕ. Пирĕн артиллери позицийĕсене пĕтерсе тăкрĕç, боеприпассен складне те аркатрĕç.

Мартăн 3-мĕш. Малалла каятпăр, анчах ăçта кайнине пĕлместпĕр. Фронта илсе çитрĕмĕр. Анчах ку фронт çулĕхи мар, вăл йăлтах урăхла.

Мартăн 5-мĕш. Ирхине артиллерирен питĕ вăйлăн печĕç. Вырăссем шуйттан пекех тĕл перессĕ. Пирĕн блиндажа аркатса тăкрĕç. Эпĕ темĕнле тĕлĕнмелле майпа кăна чĕрĕ юлнă. Штабра пултăм, ăçта пăхнă унта вилесем выртассĕ.

Мартăн 9-мĕш. Татах артиллерирен тӳсме çук вăйлăн перессĕ. Вĕсем снарядсене ăçтан тупассĕ-ха? Вырăссем наступлени тума пуçларĕç. Пирĕн кӳршĕ — 109-мĕш полк — противник атакăланă пирки пысăк çухату тӳссе каялла чакрĕ, мĕнпур орудийĕсене юр айне е пылчăк ăшне пăрахса хăварчĕ. Эпир те каялла чакрăмăр. Пирĕн ротăри 160 çынран 47 çын кăна тăрса юлчĕ. Ах турă, мĕн пулса тăчĕ ку? Хăçан пĕтĕ çак вăрçă?

Мартăн 17-мĕш. Вырăссен танкĕсем. Çакă вара — темскерле хăрушăскер! Эпир пени вĕсене витмест, пирĕн траншейăсенчи салтаксене вĕсем пĕр тăрмавсăрах таптаса тухассĕ. Пире вырăссен авиаци çук тесе калатчĕç, акă паян çичĕмĕш хут ĕнтĕ пирĕн позицисем çине бомбăсем пăрахассĕ. Пирĕнпе юнашар тăракан 34-мĕш полк пĕтĕмпех пекех пĕтнĕ, нумайĕшĕ тыткăна лекнĕ».

Çав дивизири Эрвин Химлер салтак ашшĕ патне çырнă çырăвĕнче çапла каланă:

«Кунта эпир йытă пурнăçĕпе пурăнатпăр. Кунĕн-çĕрĕн вырăссен атакисем. Кунта тăракан чăссене питех те пысăк сиен кӳнĕ. Салтаксем хурланассĕ. Ытларах та калатăп: ыттисене пĕлместĕп те, пирĕн рота çапăçăва тухма юрăхлă мар».

Дивизин халиччен «чапĕ» çинчен урăх асăнмассĕ ĕнтĕ. Тыткăна лекнисем пурте, пĕр сасăпа пекех, салтаксем офицерсен пульлисенчен тата гестапо тĕрмине лекесрен хăранипе кăна çапăçни çинчен каласа парассĕ. Приказсене пурнăçа кĕртессинчен пăрăннисем, çартан тарнисем, хăйсене хăйсем персе амантнисем час-часах пулассĕ. Майлă вăхăт тупса, офицер çурăмран персе вĕлерес хăрушлăх çук вăхăтра, тыткăна парăнасси — нумай салтаксен пĕртен-пĕр шухăшĕ.

Полковой комиссар
Г. ТОЛОКОЛЬНИКОВ.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла бомбардировщиксен отрячĕ, истребительсен пысăк ушкăнĕ хӳтĕлесе пынипе, Флиссинген докĕсенчи (Голландире) верфьсем тата ытти объектсем çине вĕçсе кайса тапăннă. Çавăн пекех тата истребительсем Çурçĕр Францин çыранĕсем çине вăйлăн атакăланă. Противникăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă. Англин 9 истребителĕ хăйсен базисене тавăрăнман. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Флиссингена тапăнни Англин истребительнăй авиацийĕ вăрçă пуçланнăранпа тунă операцисенчен чи пысăк наступлениллĕ операци пулса тăрать.

Пĕр эскадрилья 6.000 метр çӳллĕшĕнче «Фокке—Вульфами» йышши 30 самолета хирĕç çапăçнă.

Каярахпа çав кунах пысăк йышлă истребительсем Çурçĕр Франци çине иккĕмĕш хут вĕçсе кайса тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра çакă паллă пулнă: апрелĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германин Росток портĕ çине татах çĕнĕрен вĕçсе кайса тапăннă. Хейнкелĕн авиаци завочĕн районĕнче уйрăмах лайăх результатсем пулни палăрнă.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче тата апрелĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле тăшман самолечĕсем Англин кăнтăр çыранĕсем çине кĕрсе кайса уйрăм пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Материальнăй енĕпе хăшпĕр сиенсем пулнă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Америка войскисем Çĕнĕ Каледони утравĕ çине аннă

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем французсен Çĕнĕ Каледони утравĕ çине аннă. Çĕнĕ Каледони утравĕ Лăпкă тинĕсĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче выртать.

Паллă ĕнтĕ, Франци Германие парăннă хыççăн часах çав утрав çинче пурăнакан халăх хăй де Голле пăхăнса тăма пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Вашингтонра кăларнă коммюникере çапла каланă: Америка войскисем утрав çине ăна хӳтĕлес шухăшпа унти влаçсем ырланипе аннă, мĕншĕн тесен çав утрав противникшăн Австралипе Çĕнĕ Зеланди çине тапăнса кĕрсе каймалли вырăн пулса тăрать. Çав колоние хăйĕн войскисене ярса, Америка правительстви иккĕ уйăх маларах Вашингтонра пичетлесе кăларнă килĕшĕве пурнăçа кĕртет. Çав килĕшӳ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе ирĕклĕ Францин Национальнăй Комитечĕ французсен Лăпкă тинĕс çинчи çĕршывĕсене сыхлас тĕлĕшпе пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли çинчен калать.

Италири фашистла партин пуçлăхĕсем пăсăлса кайса ирсĕр ĕçсем туни

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Италире фашистла партин пуçлăхĕсене чылайĕшне, продовольствипе спекуляци тăвассĕ тесе айăпласа, арестленĕ. Арестленисем хушшинче çаксем пур: фашистла корпораци палатин членĕсем Эцио Брага тата Умберто Каттанеца, фашистсен облаçри организацин комитечĕн секретарĕн ĕçне туса пыракан Камильо Перрьер тата кăмрăк сутăçи Витали.

Пĕлтернĕ тăрăх, çав çынсем спекуляци тунине, вĕсен аферистла ĕçĕсене халăхсем нумайĕшĕ пĕлсе çитнĕ пулнă, çавăнпа та Муссолинин ирĕксĕрех вĕсене арестлеме приказ пама тивнĕ.

ЛОНДОНРА В. И. ЛЕНИН ПАМЯТНИКНЕ УÇНĂ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Финсбюри районĕнче, Холфорд-скверта (Лондонăн çурçĕр пайĕнче) В. И. Ленин памятникне уçнă. Памятник уçнă çĕрте темиçе пин çын пулнă.

Памятник уçнă çĕрте Финсбюри мэрĕ Дрэйк тухса сăмах каланă. Çак памятнике уçни совет халăхĕсен аслă çулпуçне сума суса чыслани пулать, çав вăхăтрах Совет Союзĕн паттăр çарне хисеп туни пулать, тенĕ вăл.

Парламент членĕ лейборист Вудс çапла каланă: «Ленин тĕнчере пулнă аслă çынсенчен пуринчен те ытларах мухтава тивĕçлĕ. Унăн вĕрентĕвĕ совет халăхĕсен хăйсен тăван çĕршывне сыхлас кăмăлне, хурçă пек çирĕп кăмăлне çуратнă».

Ун хыççăнчен Поллит тухса сăмах каланă. «Ленинăн ячĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ, Ленин хăй валли калама çук чаплă памятник лартрĕ, вăл памятник — пур демократиллĕ халăхсене те хавхалантарса тăракан аслă та никам çĕнтереймен Совет Союзĕ пулать», — тенĕ Поллит.

Совет Союзĕн Англири посолĕ Майский юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Германин бомбисем çурри ишсе антарнă çурт çумне, 1902—1903 çулсенче аслă Ленин пурăннă çурт çумне 5 эрне каярах, Лондонри муниципалитет йышăннă тăрăх, мемориальнăй хăма çапса хучĕç. Паян, Финсбюри районĕн муниципалитечĕ йышăннă тăрăх, Ленин пĕр хутчен кăна мар утса çӳренĕ вырăнта, скверта, акă унăн памятникне уçассĕ. Çакă иккĕ факт — калама çук пысăк вырăн йышăнса тăракан фактсем. Вĕсем иккĕ халăх пĕр-пĕрне тата лайăхрах ăнланма тытăнни çинчен уçăнах каласа парассĕ», — тенĕ.

Малалла Майский юлташ çапла каланă: «Совет халăхĕ, Сталин ертсе пынипе, Ленин кăтартнă тăрăх пырса, çак паян кун пулса иртекен аслă кĕрешӳре хăйĕн тивĕçлĕ ĕçне мĕн вĕçне çитиччен туса пырĕ», — тенĕ. Майский юлташ Великобританипе Америка тата ытти туслă çĕршывсен халăхĕсем те çав нашкалах хăйсем тума тивĕçлисене пурне те тăвасса, çапла вара пĕрле тăрăшнипе кăçалах, 1942 çултах тăшмана пĕтерсе тăкасса шанатăп, тенĕ.

Детройтра Америкăри славянсен съезчĕ уçăлнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен чи пысăк промышленноçлă хулисенчен пĕринче — Детройтра Америкăри славянсен съезчĕ уçăлнă. Съезда иккĕ пине яхăн делегат пухăннă. Вĕсем хушшинче — вырăссен, украинецсен, словаксен, поляксен, сербсен, хорватсен тата словенсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи организацийĕсен представителĕсем. Çавăн пекех тата съездра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи тĕрлĕрен профсоюз организацийĕсен нумай йышлă представителĕсем хутшăнса ĕçлеççĕ. Çав профсоюзсен членĕсем чылайĕшĕ славянсем пулса тăраççĕ. Съезда автомобиль промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн, горняксен, электриксен, апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисен, çĕвĕç-рабочисен профсоюзĕсен т. ыт. представителĕсем те пынă.

Съезд председателĕ пулма Америкăри мĕнпур славянсен комитечĕн председательне Блэр Г. Гунтера суйланă, секретарь пулса ĕçлеме Стефен Земана суйланă.

Хĕрлĕ Çарпа Совет халăхне ырă сунса калакан ораторсен сăмахĕсене съезд делегачĕсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ.

Съезд Рузвельт патне салам янă. Унта çапла каланă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан славянсем Америка правительствин вăрçă тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçĕсенче питех те анлă пулăшу парĕç, тенĕ.

Англи авиацийĕ Шербур, Дюнкерк, Кале, Гавр, Абвиль тата Росток çине вĕçсе пырса тапăнни

Пльзеньра Шкода завочĕсем çине бомбăсем пăрахни

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 25-мĕшĕнче, ирхине ирех пуçласа, Англи истребителĕсем вуннăпĕр сехет хушшинче наступлениллĕ ултă пысăк операци туса ирттернĕ. Çав операцисен фрончĕ Дюнкеркран пуçласа Шербур таран пĕтĕмпе 250 мильăран ытла тăсăлса выртать.

Ирхине «Бостон» бомбардировщиксене хӳтĕлесе кайнă истребительсен эскадрильисем Шербурпа Дюнкерк çине вĕçсе пырса тапăннă, «Харрикейн» бомбардировщиксем Кале çине тапăннă. Шербурпа Дюнкеркра бомбăсене доксем çине пăрахнă, Калере завод çине. Дюнкерка тапăннă чухне противникăн 5 истребительне пĕтернĕ.

Кăнтăрла «Бостон» бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Гаврпа Абвиль çине вĕçсе кайса тапăннă, истребительсен эскадрильисем Шербур районне тапăннă. Гаврта бомбăсене доксем çине пăрахнă, Абвильте — чугунçул узелĕ çине. Сывлăшра темиçе çапăçу пулса иртнĕ, çав çапăçусенче противникăн 3 истребительне пĕтерсе тăкнă. Çав мĕнпур операцисенчен Англин 15 истребителĕ тата пĕр бомбардировщикĕ каялла тавăрăнман.

Иртнĕ çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ татах Ростока атакăланă, унта авиацин «Хейнкель» завочĕсем пур. Çав çĕрех йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Кăнтăр Германири объектсем çине тата Пльзеньра Шкода завочĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Дюнкеркри доксем çине те бомбăсем пăрахнă. Унсăр пуçне тата Францин оккупациленĕ зонинчи аэродромсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав операцисенчен Англин 5 бомбардировщикĕ каялла тавăрăнман.

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: апрелĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник авиацийĕн активлăхĕ Хĕвеланăç тата Кăнтăр Англи çинче, çавăн пекех тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Шотланди çинче те палăрнă. Пуринчен ытла Хĕвеланăç Англин иккĕ хули çине тапăннă, çав хуласенчен пĕринче тунă сиен тата вилнисемпе аманнисен шучĕ чылаях пысăк. Хĕвеланăç Англин тепĕр хулинче пăрахнă бомбăсем хăшпĕр материаллă сиенсем тунă. Вилнисемпе аманнисем пур. Çурçĕр-Хĕвелтухăç Шотландире пăрахнă бомбăсем хăшпĕр сиенсем кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ пысăк мар. Ытти пунктсенчен те пысăк мар сиенсем туни çинчен пĕлтерессĕ, вĕсенче вилнисемпе аманнисем пулман.

Булонь районĕнчи арестсем

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла пĕлтерет: Германи влаçĕсем апрелĕн 24-мĕшĕнче Булонь районĕнче çĕрле пулаччен 150 çынна арестленĕ. Арестленĕ çынсене допрос тунă хыççăн нимĕçсем: Булонь çыннисем Булонь районĕ çине тапăнма Англие пулăшнă, тесе пĕлтернĕ.

НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ ЛЕНИНГРАД ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

Апрелĕн 24-мĕшпе 25-мĕшĕнче кăнтăрла нимĕç самолечĕсем Ленинград çине иккĕ хут вĕçсе пырса тапăннă. Пирĕн истребительсем тата зенитнăй батарейăсем ăнăçлăн ĕçленипе пула противник самолечĕсен пысăк пайне сапаласа янă, Ленинград çине вĕçсе çитме паман. Хула çине пĕчченшерĕн кĕрсе кайнă тăшман самолечĕсем пурăнмалли çуртсем çине тĕлли-паллисĕр бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче вĕçсе килсе тапăннă вăхăтра пирĕн истребительсем нимĕçсен 15 самолетне персе антарнă, зенитнăй артиллери 9 самолет персе антарнă, пĕтĕмпе вăл кун нимĕçсен 24 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче вĕçсе килсе тапăннă чухне пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Мĕн пурĕ апрелĕн 24-мĕшпе 25-мĕшĕнче нимĕçсен 35 самолетне пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне сывлăшри çапăçусенче пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 3 самолетне сиенленĕ, вăл самолетсем нимĕçсем йышăнса тăракан территори çине анса ларнă. Тăшманăн Ленинград çине тапăннă авиацине хирĕç кĕрешнĕ чухне пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Гвардеецпа тĕл пулни

СЕНТĔРВĂРРИ. Çак кунсенче Сĕнтĕрвăрринчи комсомолецсемпе çамрăксем вечер турĕç. Унта вĕсем отечественнăй вăрçă геройĕпе, гвардеец Сергей Прокопьев юлташпа тĕл пулчĕç.

Хулари çамрăксем хăйсен паттăр землякне ăшшăн кĕтсе илчĕç. Туслă калаçура С. Прокопьев юлташ пирĕн боецсен, командирсемпе политработниксен паттăрлăхĕ çинчен, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

— Кăштах канатăп та каллех фронта каятăп, — тет Прокопьев юлташ.

Политрук Прокопьев юлташ ертсе пыракан юланутçăсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче пĕре çеç мар хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Çавăншăн вĕсенчен нумайĕшне орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Эскадрон политрукĕ Прокопьев юлташ хăй Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденне илме тивĕçлĕ пулнă.

Вечерта пулнисенчен ВЛКСМ райком секретарĕ Плотникова, хулари активистсем Юричев, Васильева юлташсем тылри çамрăксем фронта пулăшни çинчен каласа пачĕç.

А. СМЫШЛЯЕВ.

ПИОНЕРСЕМ ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧЕ

КАЛИНИНО. Юнтапари туллимар вăтам шкулти пионерсен старши вожатăйĕ пулса Е. Александрова юлташ ĕçлет. Вăл пионерсем хушшинчи пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать. Вĕренӳ çулĕ пуçлансанах отрядсенче ПВХО кружокĕсем организациленĕ. Çав кружоксенче 109 пионер вĕренсе ПВХО значокĕн нормисене панă. Пионерсем, хăйсем вĕреннине ашшĕ-амăшĕсене каласа парса, вĕсене те ПВХО ĕçĕпе паллаштарассĕ.

Çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе те пионерсем самаях ĕçлессĕ. Вĕсем оборона фондне 360 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса панă. Фронтри пиччĕшĕсемпе ашшĕсем патне парне шучĕпе 62 енчĕк, 12 сăмса тутри янă; 200 килограмм тимĕр-тăмăр, 228 пуштă кĕленче пухса панă.

Отрядсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăрассĕ. Стена хаçачĕсем пионерсене вĕренӳре пысăк пулăшу кӳрессĕ.

Шкулта кашни отрядăн ăмăрту договорĕ пур. Ăмăрту мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслессĕ те ятарласа тунă витрина çине итогсене çырса пырассĕ.

Халĕ çураки çывхарса килет. Пионерсем ку пысăк ĕç çинчен те манса кайман. Вĕсем колхозниксене ялхуçалăх машинисене пухса лартма пулăшнă, 30 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса панă.

И. НАРЫШКИН.
И. ТРОФИМОВ.

ÇУРХИ ШЫВ СИЕНĔСРЕН СЫХЛАНАТПĂР

Иртнĕ кĕркунне йĕпе çанталăк тăнипе тата хĕлле юр нумай çунипе çак çуркунне çырмасене шыв нумай тулса пĕвесене татма тата кĕперсене ишсе кайма пултарнă. Республикăри тройка панă кăтартусене шута илсе, Ямаккасси (Канаш р.) хресченĕсем çурхи шыв сиенĕсенчен каясран сыхланмалли мерăсем йышăнчĕç. Ялсоветĕ çумĕнче тройка уйăрнă. Тройка ĕçĕсене исполком председателĕ Р. Петров юлташ ертсе пырать. Тройка çурхи шыв сиенĕсем кӳресрен хирĕç кĕрешме 30 çынран уйрăм группа туса хунă. Çак группăри çынсенчен хăшĕ арман пĕвисене, хăшĕ кĕперсене, хăшĕ ахаль пĕвесене сыхласа тăрассĕ. Вĕсем пĕве умĕсене тата кĕпер таврашĕсене юртан тасатса хучĕç, арман умĕнчи пăрсене касрĕç тата çул хĕррисенчи канавсене юртан тасатрĕç. Пĕвесем патне — улăм, чул тата ытти япаласем те турттарса купаларĕç. Ямаккасси хресченĕсем çурхи шыв сиен кӳрессине хирĕç кĕрешме пур енчен те хатĕрленчĕç.

И. МАКСИМОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ирĕке кăларнă çĕр çинчи çуркунне

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР. (ТАСС спецкорĕ). Ĕлĕк ку вырăнта пĕр вăрман ĕçĕпе кăна пурăннă. Каярахпа çывăхри вăрмансене кăкла-кăкла уй тунă. Тулă акма тытăннă. Тулă уйĕ, саралнăçемĕн саралса пырса, çурçĕр еннелле тăсса çитмех тăсăлса кайнă.

Кăнтăрла, йăлтăркка хĕвел çути ӳкнĕ уйра пăртак кăна палăракан тĕтре тăрать. Çĕр вăранать. Час акă тăрисем юрлама тытăнĕç, çырмасем тăрăх çурхи шыв шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса юхĕ. Çĕр вăранать, хăй ăшне вăрлăх илме хатĕрленет. Анчах та çав вăрлăха акакансем вăрлăхне хăй килĕнчен мар илсе пырĕ. Ялта мар, вăрманта, çĕр пӳртре са янă. Вăрлăх акаканĕ уя вăрмантан пырĕ. Ялта мар, вăрманта, çĕр пӳртре хатĕрленнĕ вăл çуракине. Кӳлмелли хатĕрсене те çакăнтах юсанă, лашине те çакăнтах çурхи ака валли çитерсе мăнтăрлатнă. Лаши валли вăл утă улăхран, нимĕçсенчен вăрттăн, çĕрле турттарнă.

Вăрман шанчăклă пулнă. Нимĕçсем вăрмана пыма хăранă. Хушăран кăна пĕр-пĕр пуççăртарах нимĕç йĕлтĕрçи вăрмана пыма хăйнă, анчах вăл та шала кĕме шикленнĕ.

Хĕлпе иртнĕ хĕллехи кунсем. Çĕрулмите, çăнăх та вĕçне çитсе пынă, анчах этем çапах та çуркуннене, хăйĕн çуркуннине кĕтсе илнĕ-илнех. Пирĕн войскисен авангарчĕсем иртсе кайнă-кайманах колхозниксем хăйсен тăван ялĕсен еннелле туртăннă. Вăрмантан пуринчен малтан Анисим Егорыч старик, партизансемпе çар çыннисен йăхĕн пуçлăхĕ, тухнă. Унăн виçĕ мăнукĕ çарта, иккĕ ывăлĕ партизансен отрядĕнче. Вăл хăй кинĕпе тата пĕчĕк мăнукĕсемпе пĕрле вăрманта пурăннă.

— Каялла тавăрăнма вăхăт çитнине эпир çакăнтан пĕлтĕмĕр, — тет Анисим Егорыч. — Пирĕн вăрманта почта пур, вăл хыпар çӳретет. Пăшал сассисем вăйлăн илтĕнчĕç, çавăнтан та нимĕçсене хĕсни паллă пулчĕ. Унччен лăпкăччĕ, нимĕнле сас-чĕвĕ те илтĕнместчĕ. Тата пушарсем тухма тытăнчĕç... Çавăнтан та нимĕçсем кайма тытăнни паллă пулчĕ. Чуна илетчĕç ĕнтĕ çав пушарсем. Çĕрле çывăрас килмест, ыйхă вĕçет, тухатăн та тула, — вăрман хыçĕнче пушар ялкăшать. Çутă, çутă. Пирĕн тупрасене çунтарассĕ. Инçетре те мар, çывăхрах.

Старикĕн тăван ялĕ ларнă вырăнта — юр витсе кайнă уй кăна тăрса юлнă. Ĕнер тăман çуса кайнă. Ял вырăнĕ палăрмасть те. Анчах та старикĕн хăйĕн паллисем пур. Вăл йăнăшмасть, вăл часах хăйĕн ялĕ ларнă вырăна тупать. Асат хуçнă йăмра, сăрт, çул хĕррисенчи çивĕч чул, кӳлĕ (кунта юр уйри пек мар, аялрах выртать) — çаксем тăрăх тата ытти паллăсем, çак вырăнта пурăннă çынсемшĕн пĕлĕш паллăсем тăрăх старик часах хăйĕн ялĕ ларнă вырăна тупать.

Ну, Ваня, халĕ хăвăн çырăвна пар ĕнтĕ.

Старикпе мăнукĕ çул хĕррине пĕчĕк юпа лартнă, çав юпа çине ял ятне çырнă урлă хăма çапса хунă.

Ялта, Анисим Егорыч мана çул çинче каласа панă тăрăх, 200 килĕ пулнă.

Эпир малалла, фронт линине тăрăхла утатпăр. Инçетрен оруди сассисем илтĕнсе тăрассĕ. Çул çинче унта та кунта ялсем тĕл пулассĕ. Вĕсем çине пăхсанах кунта мĕнле çапăçусем пулса иртнине пĕлме пулать. Ял тĕрĕс-тĕкелех пулсан — нимĕçсем çухалса кайса, епле килчĕ çапла тухса тарнине пĕлтерет, ял вырăнĕнче пушă уй кăна пулни — фашистсем малтанах хатĕрленсе тарни çинчен калать. Хăшпĕр ялсене çунтарман. Анчах çав ялсенче те нимĕçсем хăйсен йĕрĕсене хăварнă. Пӳрт çийĕсене сӳсе антарнă. Хăмисемпе кăмака хутнă. Вăрман кӳршĕрех пулнă пулин те, нимĕçсем вутта кайма хăранă. Нимĕçсем çын аллипе ĕçленĕ чух тасарах пурăннă, хăйсене ĕçлеме тивсен — пылчăк ăшне путнă. Пушанса юлнă ялти çуртсене пырса кĕме çук — таса мар, шăршлă. Кунта, çурçĕр енчи çĕршывра, çуртсем тăпăл-тăпăл та пысăк, чӳрече янахĕсене илемлетсе тĕрлесе пĕтернĕ, крыльцисем çӳллĕ. Çав çуртсен алăкĕсем çинче халĕ те-ха нимĕçсем намăссăрланса «Белегт» — «йышăннă» тесе çырса хăварнисем палăрассĕ. Çав сăмаха квартирьер çĕрле васкаварлăн пурăпа чĕркелесе çырса хăварнă пулас та; ăна ирпе салтаксем тепĕр хут вара сăрпах çырса тухнă пулмалла.

Çӳллĕ крыльца çине хĕрарăм хăпарать. Ун аллинче пĕр витре вĕри шыв. Хĕрарăм çав вăрă-хурахсен кĕлемине шывпа çуса ним палăрми тăвать. Аялта, крыльца умĕнчи тарăн юр çинче çын мĕлки палăрать. Яла паян ирĕке кăларнă, мĕлке нимĕç салтакĕн мĕлки. Вăл суранлăскер тарма ĕлкĕреймен-мĕн. Çĕмĕрĕлнĕ урапи унăн хӳме çумĕнче выртать, çавăнтах пулемет дискĕсем те сапаланса выртассĕ. Тăкăрлăкра нимĕçсен çăмăл танкĕ пӳлĕнсе ларнă. Унăн башнине аркатса пăрахнă. Вĕт-шак ачапăчасем ун тавра явăнассĕ. Пĕр тĕле корзинкăсем купаласа хунă. Пăхма нимĕн те мар пек хăй. Анчах та вăл купа хăрушă купа — унта минăсем. Пирĕн саперсем вăл вырăнта карта тытса çавăрса хунă.

Алăк çине çырса хунă сăмахăн юлашки саспаллине те çуса янă ĕнтĕ. Хĕрарăм крыльца çинчен анать.

— Эпĕ, — тет вăл, — хам урăх ялтан, ав лешĕнчен...

Хĕрарăм çырма еннелле тĕллесе кăтартать. Çав вырăнта та эпĕ пĕчĕк юпа курнăччĕ. Çав юпа та çунтарса янă ял вырăнне палăртать. Нимĕçсем çав яла пĕр сас-чĕвĕсĕр пăрахса хăварнă. Связистсем телефонĕсене илнĕ те, пралукĕсене чĕркенĕ те пăрахса кайнă. Колхозниксем вара нимĕçсем пуçĕпех кайрĕç тесе, хăйсен килĕсене тирпейлеме тытăннă. Анчах ирпе нимĕçсен тепĕр отрячĕ пырса çитнĕ. Салтаксем вăрçман, харкашман, хăратман та. Пăшăл-пăшăл пĕр-пĕринпе пăшăлтатнă та васкамасăр хăйсен ĕçне тума тытăннă.

Пĕр вăрă-хурахĕ, вилнĕ сурăх куçĕ пек куçли, алăк çине тĕллесе кăтартнă та çапла каланă: «Матка, фью! Фью!»

— Ара, ăçта каям-ха эпĕ? — тенĕ хĕрарăм, — эпĕ пĕччен мар-çке — манăн пĕчĕк ачасем пур...

— Фью! — тенĕ те лешĕ, юр çине, вăрман еннелле, пăрланса хытса ларнă çырмасемпе йӳçлĕхсем еннелле тĕллесе кăтартнă. Хăй вут тивретекен пульăсемпе стенасем çине, чӳрече хушăкĕсем çине пеме тытăннă. Çур сехетрех вĕсем пĕтĕм яла вут чĕртсе янă та йĕлтĕрсемпе шăппăн ялтан тухса кайнă.

— Ырă чĕлхе те кăлармарĕç вĕсем пирĕншĕн. Йытта хăваланă пек кăна «фью» тесе хăваларĕç, — тесе аса илет хĕрарăм. Унăн куçĕсем хаяр çиллĕпе хыпса çунасçĕ. — Камран кăна çураласçĕ-ши çавнашкал ирсĕрсем! Амăшĕсене курасчĕ.

Нимĕçсем мирлĕ халăхсене вĕлернĕ, чĕрĕ пурнăçа таптанă. Вĕсем ăна тымарĕпех кăкласа пăрахасшăн пулнă. Анчах пирĕн пурнăçăн тымарĕ çав вăрă-хурахсем акакан вилĕмрен вăйлăрах, хăватлăрах! Вăрă-хурахсене хăвалассĕ, вĕсем хыççăнах пурнăç çĕнĕрен тапма, çĕнĕрен ешĕрме тытăнать. Вăл пурнăçа нимĕн те хăратаяс çук. Ан тив, уйра тăтăр тăлăх юпа. Вăл виле палли мар.

Кунти пурнăç ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ пулĕ. Пурнăç çĕнтеретех, вăл ĕнтĕ халех палăрать. Акă унăн пирвайхи палли: ĕнер кăна çак вырăнта пушă уй кăначчĕ, юртан пуçне кунта урăх нимĕн те çукчĕ, паян ак çак вырăнта пура пуралама тытăннă. Аялти йĕркисене хунă та ĕнтĕ. Хуçипе курса калаçаймарăмăр эпир. Вăл вăрмана пĕренесем илме кайнă. Пĕрремĕш çĕнĕ çурт çумне кӳршисем ак пырса ларĕç. Вара каллех, ĕлĕкхи пекех, этемсем вăрман юхтарма, çурçĕр тулли тата вăрăм сӳслĕ йĕтĕн акса тума тытăнĕç.

С. МАРВИЧ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 752

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 [illegible]